# ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНӖ

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ХАЛӐХА ТАТА ТЕРРИТОРИСЕНЕ ҪУТ ҪАНТАЛӐКПА ТЕХНОГЕН СӐЛТАВӖСЕМПЕ ПУЛАКАН МАЙСӐР ЛАРУ-ТӐРУРАН ХӲТӖЛЕССИ ҪИНЧЕН" САККУННЕ ТАТА ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПУШАР ХӐРУШСӐРЛӐХӖ ҪИНЧЕН" САККУННЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТЕССИ ҪИНЧЕН

*Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ 2024 ҫулхи юпа уйӑхӗн 24-мӗшӗнче йышӑннӑ*

**1 статья**

Чӑваш Республикин "Чӑваш Республикинчи халӑха тата территорисене ҫут ҫанталӑкпа техноген сӑлтавӗсемпе пулакан майсӑр лару-тӑруран хӳтӗлесси ҫинчен" 1996 ҫулхи ака уйӑхӗн 15-мӗшӗнчи 7 №-лӗ саккунне (Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн ведомоҫӗсем, 1996, 10 №; 2000, 37 №; 2002, 46 №; 2004, 61 №; 2007, 74 №; 2009, 80 №; 2010, 87 №; 2011, 90 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаҫат, 2012, чӳк уйӑхӗн 22-мӗшӗ; Чӑваш Республикин Саккунӗсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 12 №; 2015, 10 №; 2016, 3 №; "Республика" хаҫат, 2020, пуш уйӑхӗн 11-мӗшӗ, утӑ уйӑхӗн 15-мӗшӗ; 2021, раштав уйӑхӗн 8-мӗшӗ; 2022, ака уйӑхӗн 6-мӗшӗ, чӳк уйӑхӗн 16-мӗшӗ; 2023, ака уйӑхӗн 5-мӗшӗ; 2024, ҫу уйӑхӗн 3-мӗшӗ) ҫакӑн пек улшӑнусем кӗртес:

1) 4 статьяра:

а) пӗрремӗш пайра "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан власть органӗсен" сӑмахсене "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан органӗсен" сӑмахсемпе улӑштарас;

ă) виççĕмĕш пайăн виççĕмĕш абзацĕнче "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

2) 5 статьян пĕрремĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

3) 7 статьяра:

а) иккĕмĕш пая çакăн пек çырса предложени хушса хурас: "Майсăр лару-тăру сиксе тухма пултарас хăрушлăх пур е майсăр лару-тăру сиксе тухнă чухне халăха тата территорисене майсăр лару-тăруран хӳтĕлес енĕпе мероприятисем туса ирттерес ĕçе майсăр лару-тăруран асăрхаттарас тата вĕсене пĕтерес енĕпе тумалли ĕç планĕсемпе килĕшӳллĕн тăваççĕ.";

ă) тăваттăмĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

4) 8 статьян тăваттăмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органне" сăмахсемпе улăштарас;

5) 10 статьян 1-мĕш пунктĕнче:

а) тăваттăмĕш абзацра "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) пиллĕкмĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

б) вун çиччĕмĕш абзацра "çут çанталăкпа техноген сăлтавĕсемпе пулакан" сăмахсене кăларса пăрахас;

6) 11 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) пĕрремĕш пайра тивĕçлĕ хисеплĕ тата падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене тивĕçлĕ хисепри тата падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) иккĕмĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

в) виççĕмĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

тăваттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"муниципалитетсем хушшинчи тата регион пĕлтерĕшлĕ майсăр лару-тăруран асăрхаттарас тата вĕсем кӳнĕ сиене пĕтерес енĕпе ĕçсем туса ирттерессипе, майсăр лару-тăру вăхăтĕнче çынсен пурнăçне çăлма тата вĕсен сывлăхне сыхласа хăварма пулăшакан ĕçсем пурнăçласси;";

çиччĕмĕш абзацра "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

7) 12 статьян пĕрремĕш пайĕнче тивĕçлĕ падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене тивĕçлĕ падежри "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

8) 13 статьяра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

9) 14 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 1-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

б) 2-мĕш пунктăн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

в) 3-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

г) 4-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

д) 5-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

10) 19 статьян 1-мĕш пункчĕн виççĕмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

11) 23 статьяра:

а) ятĕнче "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

12) 24 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

ă) "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

13) 26 статьян пĕрремĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсемпе" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

14) 29 статьяра:

а) пĕрремĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) тăваттăмĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен" 2005 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 65 №; 2007, 73 №; 2008, 75 №; 2009, 81 №; 2011, 90 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; "Республика" хаçат, 2015, раштав уйăхĕн 10-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2016, 3 №; "Республика" хаçат, 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьян 2-мĕш пайĕнче:

а) тăххăрмĕш абзацра "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) вун çиччĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"ландшафт (çут çанталăк) пушарĕсене (вăрман фончĕн çĕрĕсем, оборона тата хăрушсăрлăх çĕрĕсем, уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен çĕрĕсем çинчи вăрман пушарĕсене тата ытти ландшафт (çут çанталăк) пушарĕсемсĕр пуçне) сӳнтермелли плансене туса хатĕрлет тата çирĕплетет, çавăн пекех патшалăхăн майсăр лару-тăруран асăрхаттармалли тата вĕсене пĕтермелли пĕрлехи тытăмĕн Чăваш Республикин территори-

йӗнче вырнаҫнӑ тата халӑха тата территорисене майсӑр лару-тӑруран хӳтӗлес енӗпе йышӑннӑ саккунсемпе килӗшӳллӗн ӗҫлекен вӑйӗсемпе тата хатӗрӗсемпе усӑ курса ҫавнашкал пушарсене сӳнтерес ӗҫе йӗркелет;";

2) 5 статьян 2-мӗш пайӗнче "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан власть органӗн" сӑмахсене "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан органӗн" сӑмахсемпе улӑштарас;

3) $8^{1}$ статьян 2-мӗш пайӗн пӗрремӗш абзацӗнче "Чӑваш Республикин патшалӑх влаҫӗн органӗ" сӑмахсене "Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан органӗ" сӑмахсемпе улӑштарас.

**3 статья**

1. Ҫак Саккун, ҫак статьяпа урӑх вӑхӑтра вӑя кӗртме палӑртнӑ положенисемсӗр пуҫне, ӑна официаллӑ йӗркепе пичетлесе кӑларнӑ кунран пуҫласа вӑя кӗрет.

2. Ҫак Саккунӑн 1 статйин 3-мӗш пункчӗн "а" ҫум пункчӗ, 5-мӗш пункчӗн "б" ҫум пункчӗ, 6-мӗш пунктӑн "в" ҫум пункчӗн виҫҫӗмӗш тата тӑваттӑмӗш абзацӗсем тата 2 статйин 1-мӗш пункчӗн "ӑ" ҫум пункчӗ 2024 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 26-мӗшӗнчен пуҫласа вӑя кӗреҫҫӗ.

Чӑваш Республикин
Пуҫлӑхӗ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 ҫулхи юпа уйӑхӗн 25-мӗшӗ
71 №